К 84.89(=Чув)
А 94
9530-ЧУВ



Алексей Афанасьев

# Телей уççи

Национальная библиотека ЧР
4-009530

С (чув)
А94

Ачалăхри тусăмсене
халаллатăп



## Алексей Афанасьев

# Телей уççи

Сăвăлла юмах

ЧĂВАШ АССР КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1965

Телей уççи!.. Мĕн чухлĕ асап, терт курма тивет Керимĕн çав уçă пулăшнипе çынсем валли чăн-чăн савăнăç, ырлăх тупассишĕн. Вăл, çĕршыври халăха инкек кӳрекен тăшмансене — Хĕнхурпа унăн тăванĕсене — хирĕç çапăçса, нумай хутчен аманать, вилĕм умĕнче пулать. Вăй-хал хурса кĕрешни сая каймасть: кăвар чун-чĕреллĕ Керим Хĕнхур çарне çапса аркатать, çĕршыва пусмăртан хăтарать.

Кериме хăй юратнă хĕрĕ Ели, аппăшĕ Ариш, йыснăшĕ Куракăш, утрав пики тата ыттисем те кулленех пулăшса пыраççĕ. Сăвăлла юмах çĕршывра кивĕ самана вырăнне телейлĕ те хаваслă пурнăç пуçланнипе вĕçленет.

9530 гув.

Чувашская Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького
г. Чебоксары Чувашской АССР

Проверено 10 ОКТ 2017



## ПĔРРЕМĔШ СЫПĂК

Сĕм каç хупларĕ уй-хире.
Аташнă уйăх çул шырать,
Вĕç-хĕрсĕр тарăн тӳпере
Чăма-чăма таçта тарать.
Çап-çутă çăлтăр шăхăрса
Персе анать, çĕтет таçта.
Хура мĕлки çине пăхса
Ларать пĕр çĕрĕк тунката.
Таçта-таçта, пит инçетре,
Çӳçентерсе çеçен хире,
Тапăртатать пĕр урхамах —
Килсе ситет кĕç-вĕç умах!
Аха!.. Йĕнер çинчи этем
Пуç тăрринче хĕç вылятать.
Хĕç таврана сапăть хĕлхем,
Вут-çиçĕмле ялтăртатать.
Çынни чукун шĕлепкепе,
Кăкри хупланнă тимĕрпе.
Хăй çумĕнчех уххи, сăнни —
Ку кам? Мĕнле çĕршыв çынни?

...Инçе çул хыççăн çын канать,
Çĕре выртать вăл тăсăлса.
Пуç вĕçĕнче лаши тăрать,
Ыр хуçине хуралласа.
Хир варринче таçти этем
Выртать пĕр сассăр, вилнĕ пек.
Айра пулсан çемçе çерем,
Ăна ма кирлĕ-ха тӳшек?
Пуç тăрринче тӳпе пулсан,
Кирлех-им чатăр паттăра?
Ун канăçне сыхлать кăлкан,
Ват тунката, хура тăпра...
Çур уйăхран лаша таканĕ
Тăвасшăн-шим каçхи тĕнче?
Лаша тустарнă çул тусанĕ
Палăраймасть ун çутинче.
Çул çӳресе ĕшеннĕ каччă
Мĕн иртнине аса илет,—
Иленчĕк шухăшăн çуначĕ
Таçти-таçти çĕре çитет:
Васкатчĕ вăл. Кĕтмен çĕртен
Вун икĕ пуçлă пĕр çĕлен
Çерем çине тухса выртать,
Тискерленсе унран ыйтать:
— Ăçта каятăн? Мĕн тума
Килсе эс тухрăн ман ума?
Ху ăçтине, кам иккенне
Пĕлтер халь тамăк патшине!—
Пĕр харăсах вун икĕ саслăн
Шавлать, кулать тискер çĕлен.—
Тĕрĕссине каламасассăн,
Эс çакăнтах выртса вилен!
Куратăн-и эс, ав, лере,
Ман тĕттĕм, сивĕ тĕнчере,
Юнпа вĕреççĕ хурансем,

Шалча ҫинче ҫын пуҫӗсем...
Мана савса тайман пуҫа
Кӗтет хӗҫ, шӗвӗртнӗ шалча!
Вун икӗ пуҫлӑ ҫӗлене
Калать хӑюллӑн паттӑр каччӑ:
— Ыйткаличчен камне-мӗнне
Мана сан сывлӑх сунмаллаччӗ!
Вун икӗ пуҫлӑ ху, ҫапах
Пӗлместӗн пирӗн йӑлана.
Манран эс илтӗн чӑн сӑмах,
Суйса курман эп тӑшмана.
Тӗрӗслӗхе хӳтӗлеме
Эп хатӗр, хатӗр ҫапӑҫма.
Ҫӗлен, эс килнӗ итлеме!
Итле эппин калавӑма:
Ку ҫӗршывран инҫе-инҫе,
Тусен хӗвеллӗ питтинче,
Авалтанпах хула ларать,
Чапне пур таврана сарать.
Ҫав хулара ларать аттен
Тӗп ҫурчӗ — шурӑ чул кермен.
Ас тӑвасса мӗн ӗлӗкрен
Тӑшман сӑнни унта ӳкмен.
Вилес чухне мана аттем
(Мӑнтарӑн вилчӗ иртнӗ ҫул)
Пиллерӗ: «Ӗнтӗ сывӑ пул,
Кун-ҫуллӑ пул эс. Эп сӳнем...
Ман вырӑна халь эс юлан,
Ҫак ҫӗршыври патша пулан.
Ӑс-тӑн пухас пулать. Тӗнче
Ларать, ачам, ӑс-пуҫ ҫинче».
Ҫапла ларӗ малалла:
«Этем юнне, ӗҫне хакла.
Чӑн-чӑн ырри вӑл пурнӑҫра —
Телейпеле татулӑхра.

Вилетĕп эп... Ах, юлашки
Сăмахăм çакă пулĕ-ши?..
Ак ме, Керим, телей уççи!
Пул эсĕ ун маттур хуçи!»
... Пĕррехинче ту айĕнче,
Шур хуларан чылай инçе,
Эп куртăм вăрттăн пĕр путвал —
Ăна çын чавнă-тăр авал.
Ун таврашне пăхсан, куратăн:
Катмар юман тымарĕсем,
Çын йĕрĕсем, таканлă аттăн
Чулпа хăйраннă кĕлисем...
Сиссе ют çын çывхарнине,
Кăранклатса вĕçет çăхан.
Такам лаша пуç шăммине
Тирсе хăварнă туратран.
Темрен те хытă чул тăва
Епле ватайнă-ши этем?
Кама валли кун пек йăва
Тума пултарнă чулçăсем?
Çĕр пăтлă пысăк çăраççи
Çаклатнă тимĕр алăка.
Ăçта-ха ман телей уççи?
Тен, путвала уçайĕ-ха?
Янрана пек каçхи вăрман,
Янрарĕ алăк йăн! та ян!
Яр уçăлчĕ вăл самантрах,
Пур тепĕр алăк шаларах!
Ку алăкне те уçрăм час,
Эп çитрĕм виççĕмĕш патне,
Темле старик ахлатнă сас
Тухать çак алăк тулашне.
Эп алăк уçрăм та, шалтан
Чăнлатрĕç сăнчăрсем малтан,
Вара сухаллă ват старик

Килсе тӗренчӗ ман ҫума.
Чуна пӑвса хӑратрӗ шик,
Темле вӑй хупрӗ куҫӑма.
Пуҫа ҫӗкленӗччӗ ҫӳле:
Хӑрушӑ ҫил ӳле-ӳле
Ҫывхарчӗ те ман паталла,
Ишсе пӑрахрӗ путвала...
Старик сас пачӗ тӳперен:
«Сыхлан ман алӑ лекесрен!
Асап курас куну сан пур!
Эп — пусмӑрсен патши Хӗнхур!»

Ҫапла эп тартрӑм Хӗнхура.
Ҫӗршывӑм юлчӗ пусмӑра.
Ӳсмерӗ курӑк улӑхра,
Шыв типрӗ тарӑн ҫырмара.
Шыв вырӑнне куҫран куҫҫуль
Куллен-кунах юхатчӗ пуль.
Чӑн чипертен чипер аппаҫӑм
Ман пурччӗ-ҫке пӗртен пӗрре.
Тӗрлетчӗ тӗрӗ ирӗн-каҫӑн
Садри хӑй савнӑ кӗтесре.
Аришчӗ ячӗ ун, анчах
Ӑна вӑрларӗҫ кӑнтӑрлах.
Ҫухалчӗ вӑл килти садра.
Эп кайнӑ пулнӑ сунара.
Ҫавӑрттарса хула ҫине
Ҫил-тӑвӑл аннӑ хуп-хуран..
Ҫӗршер ҫулхи юмансене
Пӑрса ӳкернӗ ураран.
Ҫынсем каларӗҫ: пирӗн кил
Тӗлне ҫитсессӗн ҫавра ҫил,
Ҫӳлтен сас пачӗ, тет, Ариш...
Ҫапла саланчӗ пирӗн йыш.
Килте эп юлтӑм пӗр-пӗччен.

... Пуян Саркун çĕршывĕнче
Пур, тет, иккен хĕвел пики,
Ниçта çук, тет, çав хĕр пекки.
Ун ячĕ те хитре — Ели,
Сăн-питĕнче — хĕвел кулли.
Çавна, тет, пӳрнĕ пĕр мана —
Каятăп шырама ăна!»
Вун икĕ пуçлă хай çĕлен
Вун ик хаяр сассипелен
Пĕрре лăхлатрĕ те кулса,
Усал Хĕнхур патша пулса,
Каларĕ: «Эс иккен Керим!
Мăшăрланмаваскатăн-им?!.»
Керим ура çине тăрать,
Сывлăмпала çиçет çерем.
Кăвак лаша пĕр тулхăрать,
Кукалесе чавать çĕре.
Уçса Керим каяс çула,
Тĕтре чаршавĕ сирĕлет.
Хир кайăк юррипе тулать,
Тӳпе хăмач пек хĕрелет.

◆



## ИККЁМЁШ СЫПĂК

Çил евĕр ыткăнать Керим,
Мăкăрланса вĕçет тусан.
Кăвакарать тĕнче хĕрри,—
Унта тусем, хура вăрман...
Яш çын юрлать хăй пынă май:
«Çулсем пит вăрăм-çке, ай-хай!..»
Кăвак лаша, ан тулхăрсам,
Часрах çитер çитес çĕре.
Кăтарт мана хальччен никам
Ачашлайман чипер хĕре!»
Пике патневаскать Керим,
Ун ĕмĕт пысăк çав тери!
Лаша вĕçет, ырмасть лаша,
Йĕри-тавра вылять ăрша.
Çăл куçĕсем — таса шерпет,
Выртса ĕçмешкĕн ĕрехет!
Чупса иртсен кас-кас лĕп çил,
Пăшăлтатать юман çулçи.
Ялкăшакан вăрман айне
Хăйса кĕмест хĕвел тĕрри.
Савăнтарса çул çӳрене

Янрать сар кайӑксен юрри.
Вӑрман шавлать, вӑрман ҫаплах
Керим умне тӑкать ахах.
Йӗс чӗлӗхлӗ хут купӑссем
Хӑйсем калаҫҫӗ кӗвӗ-ҫемӗ!
Тӗнкӗлтетеҫҫӗ кӗслесем,
Кам чарӑнса тӑрса итлемӗ?
Чипер черкке пек чечексем
Юрӑсемпе тулса лараҫҫӗ,
Ниҫта пулман телей, илем
Кунта пурри ҫинчен калаҫҫӗ.
Керим нимскер тума пӗлмест:
Мӗнле ҫӗршыв ку, хӑш патшалӑх?
Сын пурӑнни ма сисӗнмест?
Ӑҫта кайса ҫухалнӑ халӑх?..
Пуҫ тӗлӗнчи пан улмине
Керим татса илме тӑрать,
Анчах та... ҫимӗҫ вырӑнне
Юман ҫӑпанӗ сулланать!
Ҫут кӳлӗре шур пӗлӗтсем
Ишеҫҫӗ тӳпери пекех,
Пуҫ хӗрлӗ ӳкнӗ йывӑҫсем
Ҫӗртисенчен те хитререх.
Шур акӑшсемсӗр мар ку кӳлӗ —
Ишеҫҫӗ иккӗн ик енчен.
Шыв хӗрринче мӑнаҫлӑ, ҫӳллӗ
Ларать шап-шурӑ чул кермен.
Пӑхма та хӑяс ҫук чипер,
Ҫап-ҫутӑ ҫӑлтӑрлӑ тӑрри.
Кӳлли урлах каҫать кӗпер,
Эреш-мерешлӗ ун тӗрри.
Кермен тавра ахах карта,
Карта тӑрри — шур ҫӑмарта.
Ларать ир-каҫ ҫӑвар карса
Ҫӗр ӑмӑрт кайӑк ҫавӑнта.


ЭМЮ
65
ПКГ

Кӳлли енне тухма хапха,
Вăл чĕнтĕрлĕ — епле паха!
Ун ик енче ик арăслан,
Ука çилхеллĕ, йĕс чĕрнеллĕ.
Ют çын кунта кĕме тăрсан,
Унран юлайĕ юн кĕселĕ.
Керим путмарĕ шухăша,
Пĕрре хистерĕ те, лаша
Тапса çеç сикрĕ çӳлелле,
Тĕл пенĕ сăнă темелле!
Ак çитрĕ вăл кермен умне,
Кăшт лăплантарчĕ хăй чунне.
Кĕç çитмĕл çичĕ алăк харăс
Чăри-чари уçăлса кайрĕç.
Умра пике тăрать иккен,
Вăл сиввĕн çаврăнса пăхать,
Сăмах патне каймасть кивçен,
Тӳрех хăюллăн калаçать:
— Мĕнле ман икĕ арăслан
Сана ирттерчĕç хапхаран?
Çук санăн ӳтӳнте суран,
Эс тĕрĕс-тĕкеллех куран.
Анчах та лайăхрах пăхсан,
Хăй тăванне паллать тăван.
«Керим!», «Ариш!» тесе вара
Ик чун йĕрет пĕр ытамра.
Таçтан вăрланă аппăшне
Тĕл пулчĕ-çке Керим тинех.
Асăнмалли вĕсен сахал-и,
Пĕр сӳтĕлсен сăмах çăмхи?
Тĕп кил хуçи ăçта-ши халĕ —
Чипер Аришĕн упăшки?
Вăл — ăмăрт кайăксен патши,
Çунатлă та хастар Куракăш.
Вăл ташласан, эрне хушши

Çил ахăрать, тет, акăш-макăш.
Сынна сиен кӳрет-и, çук-и?—
Ана Ариш пĕлмест, илтмен.
Тӳпе хуçи хăватлă, шухă,—
Вăйне илет-мĕн çилсенчен.
Вăрман каш-каш кашларĕ те,
Çил кĕчĕ варкăшса пӳрте.
Çил хыççăн курăнчĕ этем,
Вутла çунаççĕ куçĕсем.
— Ай-хай, кунта этем шăрши.
Мĕн хыпарпа вăл килнĕ-ши?
Ариш калать упăшкине:
— Эс сывлăх сунччĕ пултăрна!
Вăрат тарçу-тĕрçӳсене,
Кĕрекӳне пуçтар хăна!
Сăпайлă чунлă-мĕн Куракăш,
Хăнашăн ырă, тарават.
Пуçне калпак лартать те чалăш,
Ик çунатне çапать çăт-çат!
Куç хупиччен тарçи-тĕрçи
Пуçтарăнать хуçи тавра:
— Патшамăр, савăн, ĕç те çи!
Сим пыл-и кирлĕ е сăра?..
Тапать патша ик урипе,
Уçма хушать чул нӳхрепе:
— Çын йăтайми пичĕкене,
Шăпах вун ик кăшăллине,
Керменелле кустарăр час,
Ун пăккине çапса уçас!
Тарçи-тĕрçи ун каткă евĕр,—
Хастарлă халăх пулмалла:
Тек чупкалать ырма пĕлмесĕр
Пĕр унталла, пĕр кунталла.
Пĕри сухан çăлса кĕрет,
Тепри турать, ав, ыхрана...

Ташлаттарать вут, сиктерет
Пăсланакан йĕс хурана.
Шур кăвакарчăн сĕтĕнчен
Тăваççĕ чăкăт, тĕрлĕ кукăль.
Сĕр! сĕрлекен хавас кермен
Уяври пек тумланнă шукăль.
Шăпах эрне хушши çапла
Тухмарĕ çын кĕрекерен.
Выртмарĕ ĕçсĕр çăпала,
Курка типмерĕ эрехрен.
... Черкки тĕпне Керим пушатрĕ,
Йĕнерлесе утне тăратрĕ.
Пилĕкĕнчи пиçиххине,
Юратнă ашшĕн парнине,
Вăл каштаран çакса хăварчĕ,
Пукан çине çул умĕн ларчĕ:
— Эп инкеке лексен, виç кун
Çак пиçиххи тумлатĕ юн.
Тархасшăн пултăрна ан манăр,
Ун чух мана çăлма тапранăр...

◆



## ВИҪҪЁМЁШ СЫПĂК

Ак вăл ăҫта Саркун ҫĕршывĕ!
Пурах-ши ун вĕҫĕ-хĕрри?
Ун ҫăлĕсем сипетлĕ, сивĕ,
Ура пусма тăпри вĕри.
Ту куписем тӳпенелле
Купаланаҫҫĕ, кармашаҫҫĕ.
Ют ҫĕршывран килен ҫиле
Кĕмесĕрех иртме хушаҫҫĕ.
Кăвак сухаллă пĕлĕтсем —
Курпун тусемшĕн ыр хăна,
Шăваҫҫĕ йывăррăн вĕсем
Ывăннипе кана-кана.
...Сăрт айĕнче эрешлĕ ҫурт,
Ем-ешĕл сад пур ун тавра.
Мĕнле патша, мĕнле улпут
Телей курать-ши ҫав ҫуртра?
Ирпе ирех сад хушшипе
Чипер шур акăш уттипе
Пĕччен ҫӳрет хĕр — хура куҫ.
Хĕвел, телей те шурăмпуҫ
Пулайнă тейĕн ун валли.
Саркун патши-ҫке ку — Ели.

Çанталăкĕ те мĕнешкел!
Ту çамкине хĕртет хĕвел.
Хир качаки — тăват ура
Ташлать, чупать çӳл ту тавра.
Иртет сăрт çулĕ — утма çул,
Унта пĕр çыннăн йĕрĕ çук.
Анчах ку мĕн-ха? Мĕн ури
Хире хускатнă çав тери?
Хуран пек шăтăксем алтсах,
Кунта йĕр тунă урхамах!
...Кĕрим анать йĕнер çинчен.
Тем чăрлатать пĕрмай уйра.
Тухман-ха уйăх ту енчен,
Каç тĕттĕм, хăрăм пек хура.
Мĕнле кĕрес Ели патне,
Çак пысăк шурă кермене?
Йĕри-тавра çӳрет хурал,
Аллисенче кистен, пăшал...
Мĕскер пулать те мĕн килет!—
Куракăшăн кучченеçне,
Ик кăшăллă пичĕкене,
Лаши çинчен Керим илет.
(Хĕр çураçса ĕçме ăна
Çула парса ăсатрĕ аппăш.
— Хăватлă ту, Керим, туйна!—
Тесе каланăччĕ Куракăш.)
Туя кĕтсе тăмасть хусах,
Пуçлать халех «ĕçке-çике».
Анать шампăртатса кусса
Хапха патнех хай пичĕке.
Хуралçисем унтах иккен.
«Кам пачĕ,— теççĕ,— ку мула?
Тул çутăлса çын куриччен
Ĕçсе пăхар-шим сим пыла?..»
Пĕри пуçланă сăмаха

Вĕсем тăсмаççĕ вăраха,
Пулаççĕ пурте пĕр канаш:
«Сим пыл тем мар-ха, вăл—
йăваш!
Çапса уçас юман пăкка!
Ярса ĕçес пĕрер курка!»
Пĕрер курка ĕçсен хайхи,
Ĕçес килет тата тепре!
Таçтан килет шуйттан ыйхи —
Тӳнеççĕ пурте пĕр çĕре...
Кушак пек çăмăллăн утса,
Керим кĕрет пӳрте. Курать:
Çемçе тӳшек ăшне путса,
Шур акăш пек хĕр çывăрать.
Керим курманччĕ тĕнчере
Кун пек илемлĕ сар хĕре.
Хĕлхемлĕ çĕрĕ — пӳрнинче.
Çут уйăх сăнĕ — питĕнче.
Йăвашшăн хупнă вăл куçне,
Çӳç сапаланнă хул çине.
Пикен илемлĕ аллине
Керим çыхса хурать, унтан
Саркунăн чаплă патшине
Пĕр чуп тăвать вăл тутаран.
Патша каять те вăранса:
Чăнах-и ку е тĕлĕк-и?
Хăйне пĕр каччă çыхасса
Шухăшламан Саркун пики!
Хуралсене чĕнет патша,
Вăл кăшкăрать: «Хурах!
Хурах!..»
Хăрлатнă сасă сывлăша
Чĕтрентерет тулта çавах.
Ним тăваймасть хĕр тыткăнра,
Пăркаланать, çăлкаланать.



Чувашская Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького
г. Чебоксары Чувашской АССР
9530 чв

Аптăраса çитсен вара,
Куçран пăхса вăл йăлăнать:
«Салт алсене. Пулсассăн кĕçĕн,
Юратнă шăллăм пулăн ман.
Яланлăха пĕрле эп вĕçĕп,
Хампа пĕр тантăшах пулсан».
Тумлам куççуль ӳкет çĕре,
Салтса ярать каччи хĕре.
Ели калать: «Эп кĕтнĕ çын
Эс пултăн пулĕ. Пул эппин.
Тăхăр вун тăхăр йĕкĕте
Эп ал памарăм хам килте.
Эс, вĕсенчен чи хăюлли,
Ман мăшăр пулăн!»— тет Ели.
Керим юратрĕ Елие,
Ели юратрĕ Кериме.
Юратнă çын килсен киле,
Хăна килет ĕçме-çиме!
Вун кăшăллă пичĕкери
Хăватлă сăй пĕтсен кăна,
Сӳнет хуллен хăна юрри,
Анранă çын кĕрет тăна.
Сас тытăнать юрла-юрла,
Çын ывăнать ташла-ташла.
Ыр тăвансен уйрăлмалла.
Хурăнташпа хурăнташла.
Пĕр ут çине утланнă иккĕн —
Хаваслă Елипе Керим.
Хыçра — тусан, умра — çил
вичкĕн...
Чун çĕкленӳллĕ мĕн тери!
Çил чĕлхине çын ăнлансан,
Керим васкатĕччĕ утне,
Анчах та вăл пĕлмен, курман
Кĕтмен хăрушлăх çитнине.

Сасартăк кай енчен пĕр сас
Килсе те çитрĕ. Мĕн тăвас?
«Тăхта! Тăхта!»— тесе такам
Тек кăшкăрать. Янрать такан...
«Усал тăшман!»— тесе кăна
Сăмах хушать Керим, ăна
Хуса çитет хайхи Хĕнхур:
«Ну, хĕç айне пуçна эс хур!»—
Тесе вăл сулчĕ те хĕçне,
Керим йăванчĕ çĕр çине...
Ели хирте юлать пĕччен.
Ăна тытса пилĕкĕнчен,
Хĕнхур вĕçтерчĕ каялла,
Элле хире, элле яла...
Ели юхтарнă куççуле
Çил типĕтрĕ йĕре-йĕре.
Керим — пĕр çылăхсăр виле
Пĕчченçĕ юлчĕ-çке хире...

Ах, вăйлă çав Хĕнхур патша,
Çут хĕçĕ те асамлă пуль.
Лаши те ун — маттур лаша —
Нихçан ниçта çухатмĕ çул!
Ахăрашса, кула-кула
Хĕре вăл тарчĕ вăрласа...
Хир курăнать ула-чăла,
Тӳпе тин çунă пек таса.
Пĕр ăмăрт кайăк тӳпере
Сăнать таçти-таçти çĕре.
Çӳлтен сиссе юн шăршине,
Çунаттипе уй-хир енне
«Сыв пул!»— тесе сула-сула,
Вĕçсе те кайрĕ каялла...
Керим выртать çул хĕрринче,
Юнпа хĕрелнĕ чул çинче.
Лаши çĕре чавать, мăнтарăн,

Йĕрес пек хурлăн кĕҫенет.
Хуҫин ыйхи ытла-ҫке тарăн,
Ҫӳҫне кăна ҫил вĕҫтерет...

Вăйланнăҫемĕн ҫил вăйланчĕ,
Тусан хуратрĕ хĕвеле.
Керим патне пĕр кайăк анчĕ —
Хайхи Куракăш-и, элле?
Уткалани ун тайлăк-тайлăк,
Ҫупать вăл икĕ ҫунатне.
Таҫти-таҫти ҫунатлă кайăк
Илтет-мĕн унăн сассине.
Хире анса, пĕр самантрах
Ҫĕр ăмăрт кайăк турĕ тапăр:
— Мĕн кирлĕ?—теҫҫĕ харăсах,—
Сана итлетпĕр, ыр патшамăр!
— Ҫĕр ҫĕрелле, ҫĕр ăмăрт кайăк,
Ҫак вырăнтан ҫĕкленĕр, кайăр.
Таҫти ҫĕре вĕҫсе ҫитсемĕр,
Часрах чĕр шыв тупса
килсемĕр!
Ҫĕр ăмăрт кайăк тӳпене
Вĕҫсе ҫĕкленчĕ вăш та ваш!
Тарса каяймăн инҫене,
Усал-тĕсел, Хĕнхур тавраш!
... Керим уҫать те ик куҫне:
Вăрах, тет, ҫывăрнă хăйне.
— Эс йăнăшатăн ҫав, Керим,
Хăвна эс каннă терĕн-им?
Сана кунта хура тăшман
Касса туранăччĕ хĕҫпе.
Сан юнупа, курсам, тăван,
Тăпра та, курăк та йĕпе.
Чĕр шывпала ҫуса кăна
Каллех ҫын турăм эп сана,

Часрах сывал, тепре ан йăнăш—
Тесе калать Керимĕн йыснăш.
Юнпа пĕвеннĕ чул çинчен
Сыв çын пек хăвăрт çĕкленсен,
Йыснăшĕнчен ыйтать Керим:
— Хĕре эп хăтараймăп-шим?
Тӳсет пуль тĕрлĕ асапа.
Телейсĕр пулчĕ ман шăпа!
Йысна, эс вата, эс пĕлен:
Юратура пулать çĕлен...
Юратура пулать кăвар...
Пике тени ялан тавар,
Вăйли вăрлать вăйсăрринчен.
Анчах эп чĕрĕ-ха, вилмен!
Пĕртен пĕр савнă сар хĕре
Хăтармасассăн, тĕнчере
Этем пулса ма пурăнас?
Арçын ятне ма варалас?
Шик çук халь ман. Хура элчел
Хĕçне çĕклетĕр — эп вилмен...
Кĕрешӳпе пĕрле — хĕвел,
Кĕрешӳпе пĕрле — илем!
Йысна, эс таврăн халь киле.
Ман Хĕнхура пĕтермелле!
Аппа ан хуйхăртăр, кала:
Эп таврăнатăп туйпала!

Керим шырать хăй телейне,
Тĕнче касать каллех пĕчченçĕ.
Каллех ăна Саркун енне
Паллана çул-йĕрсем чĕнеççĕ.
Телей кĕтмерĕ йĕкĕте —
Саркун енче халь çук телей.
Кĕл, кăмрăк çеç мĕн пур çĕрте,
Тип шар çитейнĕ пур тĕле.

Хура йыт пуçлă çарĕпе
Кунта çӳренĕ-мĕн Хĕнхур.
Тем тăршшĕ вăрăм çавипе
Çынна касса алхаснă мур.
...Пĕр тăлăх хирĕн варринче
Ларать илемлĕ шурă çурт,
Тĕтре тăрать ун тĕлĕнче.
Эпир кунта, ак, тепĕр хут!
Çывраççĕ уртăш — йывăççем.
Çĕрле вун иккĕ çапрĕ чан.
Лаша утланнă пĕр этем
Çĕр варринче килет таçтан.
Çынни пахча карти çумне
Кăкарчĕ ырнă лашине.
Пытанчĕ шăпчăк. Уртăшсем:
«Чим-чимĕр,— терĕç,—
тантăшсем,
Паллатпăр паттăр йĕкĕте...»
Керим сикет карта урлах.
Тӳлек ку вырăн, пит улах.
Хурал тавраш çук иккен.
Пӳртре такам сывлать пĕччен.
«Ели, ку эс-çке?.. Эп — Керим!»
«Керим! Эсех-им?.. Сывă-им»!»
Керим калать: «Ах, çĕр кĕске!
Ан сисчĕрех хуралçăсем...»
«Ман хуралсем халь вилнĕ-çке,
Çăп-çăмăл пулччăр тăприсем,—
Тет хĕр-пике.— Хĕнхурпала
Кĕрешнĕ чух тĕп пулчĕ халăх,
Çĕрпе танлашрĕ мăн хула,
Сыв юлнисен шăпи — чуралăх.
Эп тыткăнра, пĕчченлĕхре.
Тухма хушман мана садран.
Шуйттан сыхлать çӳл тӳпере

Мана тарса хӑтӑласран...
Ҫӗрле кӑна эп ирӗкре —
Ҫӳл ту ҫинче хурал канать.
Тухса куратӑп пуш хире —
Хуйхӑпала чӗрем ванать».
Чунтан калать хӑюллӑ паттӑр,
Тытать вутланнӑ кӑкӑрне:
«Атя, савни, тухса таратпӑр,
Тупатпӑр ирӗклӗх ҫулне!»
«Анчах ӑҫта тупар-ха, чунӑм?
Тарма ҫул хупӑ пур енчен.
Ҫӗн ҫӗрсене тустарӗ ҫулӑм,
Эп тарнине Хӗнхур пӗлсен...»
Тул ҫутӑлать хуллен-хуллен.
Ҫил анчӗ сивӗ ту ҫинчен.
Таҫта кӗрлерӗ аслати
Кисреннӗ пек тӗнче кашти.
«Васка, Керим, часрах васка!
Ахальтенех асмасть тӳпе.
Хӗнхур тухмарӗ-ши асма
Хӑй пек вун икӗ шӑллӗпе?..
Ҫунатлӑ учӗсем вӗсен
Вутра — кӑвар, шывра—ҫӑрттан.
Йӗнерӗсем те тимӗртен,
Чӗлпӗрӗсем те сӑнчӑртан...»
Керим калать: «Ӑҫтан тупас
Вӗсенни пек вут-урхамах?
Тӑватӑп пурнӑҫпа тупа:
Сана кунтан ҫӑлатӑпах!»
Ели калать: «Васка, савни,
Татах тӳпе кӗрлерӗ, авӑ...
Таҫти ҫӗрте, эс илтнӗ-и,
Пур вутлӑ тинӗсӗн утравӗ.
Унта пур, теҫҫӗ, авалтан
Тухатмӑш карчӑк Шапатан.

Хӗнхур ҫунатлӑ лашине
Унтан вӑрланӑ. (Вӑл кӗсре.)
Анчах кайри пӗр урине
Ҫухатнӑ, теҫҫӗ, тинӗсре.
Шӑп ҫитмӗл тинӗс леш енне —
Ҫав утрава сан каҫмалла,
Тухатмӑшӑн пӗр лашине
Вӑрламалла та тармалла».
Хӗрӳленет Керим: «Ман ҫулӑм
Выртать тӳрех ҫав утрава!
Сыв пул! Тупа ту, савнӑ чунӑм,
Таса сыхла юратӑва!»



## ТĂВАТТĂМĔШ СЫПĂК

Кăпăклана-кăпăклана
Хумсем сикеççĕ çырана,
Тупман пек вырăн выляма,
Каясшăн пек тем шырама...
Çак тинĕсре, таçти ютра,
Пытаннă пĕчĕкçĕ утрав.
Таварĕпе пуян купса
Кунта çитмен иккен нихçан.
Шуйттансене вилме сунса,
Чиркӳ кунта çапман, тет, чан...
Ку тинĕсре тулли шуйттан!
Кунта мĕн пур илем — пиçен.
Тăван çĕршыв аса килсен,
Эс тĕл пулаймăн йăмрана,
Кураймăн шурă хурăна.
Вĕри çĕлен пулса çĕрле,
Вĕçеççĕ çăлтăрсем çĕре.
Пур пĕлĕтсем кунта тăсланкă.
Пĕр кайăк çеç вĕçет — шаланкă:
Çĕр хĕвелпе çунса типсен,
Вăл çумăра ыйтать çӳлтен...

Тăхта! Тăхта! Мĕнле такан
Тапса чĕтретрĕ çырана?!
Çĕр чĕтретме юратакан
Ăçтан килет? Мĕн шырама?
Керим вăл, çитрĕ утрава!
Канмашкăн чарăнчĕ пăртак.
Тĕл-тĕл ÿсет лутра хăва,
Çук ни çăл куçĕ, ни валак.
Мĕн пулчĕ паттăр лашана?
Темле чир ерчĕ-шим ăна?
Утрав çине çитсессĕнех
Чирлерĕ, ÿкрĕ урараn.
Пĕлмен çĕре пĕр-пĕчченех
Юлатăн-çке, Керим тăван!
Çын тавралла пĕр ылтăн хурт
Нăйлатрĕ, çаврăнчĕ виç хут,
Çапла каларĕ: «Ырă пул...
Кăçал ăнмарĕ тырă-пул...
Хуртсен патши эп. Халăха
Хăварчĕ выçлăх хурлăха.
Парсам мана пĕр çăкруна,
Тен, пулăн эсĕ те хăна...
«Ăçта-ши хурт?!»— тесе кала,
Эп парăп пулăшу ялан...»
Керим пĕр çăкăр вырăнне
Туртса кăларчĕ виççĕшне,—
Ăна Куракăш çул çине
Парсаччĕ тулă çăкрине.
Хĕçне чăмăртаса алла,
Утса хăпарчĕ сăрталла.
Ума тухать пĕр айлăмри
Кивелнĕ улăм пÿрт тăрри.
Пĕртен пĕр çурт çак утравра.
Кам тунă-ши ăна? Хăçан?
Çав чăх çатанĕ пек çуртра



Пурӑнатех-ши Шапатан?
Тӗрексӗр чӑх ури ҫинче
Епле тӳнсе каймасть-ха, мур!
Курайман ҫутӑ чӳрече —
Пӗр алӑк та пӗр тӗнӗ пур.
Тен, кам пӗлет, ҫав тӗнӗрен
Пӑхса ларать пуль ҫын ҫиен...
Керим, пӳрт ҫывӑхне ҫитсен,
Хӗҫне кӑларчӗ йӗннинчен:
— Эй-эй!.. Хуҫи килте пур-и?!—
Шаккарӗ каччӑ.—Кам килте?!—
Часах туратлӑ чӑх ури
Вӑр-вар ҫеҫ ҫавӑрчӗ пӳрте.
Тӑраҫҫӗ вӑрӑм туратсем
Пӳрт тӑрринче чармакланса.
Ӳсеҫҫӗ йӗплӗ куракӑсем,—
Унта пӗр кайӑк лармасса.
Пӗр хӗсӗк алӑкран сиксе,
Керим кӗрет пӳрте шӑк-шак.
Шур кӑмака ҫинче сӗнксе
Ларать, шӑртланнӑскер, кушак.
Керим кӗрсе тӑрсассӑнах,
Тухатмӑш яш! сиксе тӑрать.
Куҫне-пуҫне шӑлмасӑрах
Ал туйине ярса тытать.
— Аван-и, ырӑ кинемей!—
Тесе калать Керим ӑна.
— Тавах сӑмахшӑн... Хӗнеме
Сиксе тӑрсаттӑм эп сана...
Тав ыр суннишӗн. Тӗпеле
Иртсем. Кала, мӗн ӗҫпеле
Утса ҫӳретӗн ҫӗр ҫинче?
Инҫе эс килнӗ, пит инҫе...
Эс килнӗ пуль лаша илме?
Пуласине малтан пӗлме

Кушакăм манăн пит ăста.
Лаша патне эппин... Тăхта!
Малтан сана паратăп ĕç.
Тăваймасассăн, вичкĕн хĕç
Касса пăрахĕ сан пуçна,
Чиксе шăтарĕ ик куçна.
Çунатлă ут вун иккĕ пур,
Пурте пĕр пек, пурте маттур.
Эс вĕсене пĕр каç кĕтсен,
Хăшне саван, çавна илен.
Пĕр лашана-и çухатсан,
Сана каçармĕ Шапатан!

Çаран çинче вун ик кĕсре.
Керим выртать. Çемçе çерем...
Вун иккĕшĕ вун ик çĕре
Тарса пытанчĕç лашасем,—
Тĕрĕссипе калас пулсан,
Лашасем мар — чипер хĕрсем.
Тухатмăш карчăк тухатсан,
Кĕсре пулаççĕ-мĕн вĕсем.
... Кĕтӳç вăранчĕ, пăхрĕ те —
Нимскер те çук таса хирте.
Çук, илтĕнмест лаша утти.
Хĕвел анать. Уй-хир çара...
Шăши куç евĕр хăй çути
Чĕтре пуçларĕ аякра.
Керим килменнине кура
Тухатмăш карчăк савăнать.
Уралла пӳрчĕ хушăран
Пĕр вырăнта ун çаврăнать.
Шупкалчĕ уйăх тӳпере,
Хуллен шăвать анăçалла.
Тухатмăш тĕттĕм кĕтесре
Хăлаçланать ташла-ташла.

— Аçта-ши хурт?!— çав хушăра
Çĕкленчĕ çил Керим тавра.
Хуртсем сĕрлеççĕ: «Ырă тус,
Пиртен мĕн кирлĕ? Пуç ан ус!»
Пĕр-ик минут та иртиччен
Мĕн пур улах кĕтессенчен
Тупса кăларчĕç утсене,
Пĕр харăсах вун иккĕшне!
Пӳртре ват карчăк ятлаçать:
«Ухмах хĕрсем! Эп пурсăра
Пĕр-иккĕ çупăп, ак, çăт-çат!
Ма сыхлаймастăр хăвăра...»
«Эпир аван пытаннă-çке!—
Тет харăсах вун ик пике.—
Хуртсем вăл ячĕ пит нумай
Пире тупмашкăн, кукамай!»
Ятлаçрĕ карчăк: «Çук, этем,
Мана каларĕç лашамсем
Сана хуртсем пулăшнине.
Хуртсем ан яр ман ĕшнене!
Чее эс пит. Ну, кĕт тепре!
Утсем ман пурте хисепре —
Вун икĕ ут. Кĕтсе килсен,
Хăшне саван, çавна илен».
Керим чĕнмерĕ пĕр сăмах.
Вун ик çунатлă урхамах
Пĕр-пĕринчен ирте-ирте
Каллех вылярĕç уй-хирте...
Керим пит хытă выçнăран
(Апат çимен вăл вăрахран)
Тутанчĕ мăкăнь куклине —
Сисмерĕ ыйхă пуснине.
Лап ӳкрĕ, ӳсĕр пек, çĕре.
Вун икĕ ут чăл-пар хире
Тарса çухалчĕç. Вĕсене

Тупма чĕнеймĕн хуртсене!
Анчах мĕскер илтет уй-хир?
Кам вăл юрлать çапла хитре?
Эс ыйхуна, тăванăм, сир,
Курсам асаплă сар хĕре!
Хирти шур чул çине вăл ларнă,
Юрлать те çивĕт çивĕтлет.
Савнийĕ ун ăçта-ши тарнă?
Хĕр юрласа кама чĕнет?
Ну, итлĕр-ха! Эпир курман хĕр
Керим ятне-мĕн асăнать:
«Ан макăр, чунăмçăм, ан макăр!
Утрав çинчен савни каять...
Керим каять... Сисмест çав
качча...
Ма, чунăм, саврăн йĕкĕте?
Лаша пулма тухатрĕ карчăк,
Вута пăрахрĕ çивĕте...»
Сас пачĕ те: «Керим!»— тесе,
Хĕр пулчĕ тăчĕ шур чечек.
Вăранчĕ каччă тĕлĕнсе,
Такам пуçран тыттарнă пек.
Керим çав самантра пăлханчĕ,—
Таçтан пĕр хĕр сасси илтет:
«Лаша пулма тухатрĕ карчăк,
Вута пăрахрĕ çивĕте».
Куç умĕнче çук пĕр лаша!
Пĕр йĕр юлман, çук нимĕн сас...
Аçа çапман тухатмăша
Кайса мĕскер тесе калас?..
Курать Керим хăй умĕнче
Çеçке çап-çутă çиçнине.
Çак Шапатан утравĕнче
Чечек шăтман, тет, ĕмĕрне!
Мĕскер чечекĕ ку ара?

Вăл шăтнă-ши хăш вăхăтра?
Керим татма тăрсассăнах —
Хай пулчĕ тăчĕ урхамах!
Тĕсрен кăвак, çилхи ука,
Хӳри, чĕрни ун кĕмĕлтен.
Маттур пуçне уха-уха
Сикет, вылять — вĕçесшĕн, тен!
Йĕвенсĕрех тытса ăна,
Керим утланнăччĕ кăна,
Лаша çĕкленчĕ тӳпене —
Те аякри çăлтăрсене
Керим валли татса пама?..
Анчах лаша хăвалама
Пуçларĕ пĕлĕт хӳттине
Пытаннă вун пĕр кĕсрене,
Пĕрре çӳле те аяла
Вĕçет хӳреллĕ çăлтăрла!
Ак пурте пур. Вун икĕ ут.
Тĕп-тĕрĕсех тухать-ха шут.
«Кусем хĕрсем-ши?» — Кериме
Çак шухăш канăç халь памасть.
Тӳр килчĕ хĕр сасне илтме —
Е чăн, е тĕлĕк — чухлаймасть.
Вăл хăй утланнă урхамах
Ытарайми пике пуль, тен?
Утсем шур пӳрт тĕлне шăпах
Вĕçсе анаççĕ пĕлĕтрен.
... Тухатмăш карчăк Шапатан
Вун икĕ кĕсрене курсан,
Йĕс чĕлĕмне ĕме-ĕме
Пуçларĕ вĕттĕн чĕтреме!
Чĕтрет ун икĕ шит янахĕ,
Чĕтрет ун хурчăка сăмси...
Ăçтан муртан сив тытамакĕ
Тухатмăша çакланчĕ-ши?

Хупать те карчӑк алӑка
Алне тытать, ак, турчӑка
Вара темччен кӳпкет унта
Кӗсресене — пикесене.
— Тухатмӑш карчӑк Шапатан,
Эс ма тивен чурусене?! —
Керим шаккарӗ алӑка,
Тинех шӑпланчӗ турчӑка...
Кӑвар чӗреллӗ Кериме
Тасти хӑрушӑ утравра
Тухатмӑш карчӑк, киремет,
Ҫук, тӑваймарӗ-ҫке чура!
Туссем хӑтарчӗҫ ыр ҫынна,
Мӗн пултӑр туслӑхран ырри?
Хӑратрӗ ҫак Шапатана
Ҫак утравра туссем пурри.
Керим умне вун ик кӗсре
Килсе тӑратрӗ кинемей.
— Хӑшне мана? — пӑхса ҫӗре
Вӑл ыйтрӗ, — юрӗ-и пӗлме?
Лӑхлатрӗ карчӑк Шапатан:
— Эс ан васка. Суйла малтан...
— Ҫакна илетӗп! — тет Керим,
Ачашласа кӑваккине.
— Ана ан ил-ха эс. Чим, чим...
Илсен илех хурисене...
— Аҫта вӑл сан чӑн сӑмахху?! —
Керим хӗсне кӑларчӗ ак.
— Ан тив, — тет карчӑк. —
Кӑмӑл ту.
Сана эп парӑп пысӑк хак...
— Чыса пӗлес пулать пӑртак!
Ху сӑмахна эс пул хуҫа!
Ҫак пулчӗ-им хак тӳлени?! —
Пыл хурчӗсем сӗр сӗрлени

Кĕçех хупларĕ сывлăша.
Мĕн пур енчен тухатмăша
Сырса та илчĕç хуп-хура.
Леш çухăрать: «Хурах! Хурах!..»
Керим вĕçет урхамахпа,
Çитес çĕре çитме вăл тивĕç.
Хăрушă хум çапа-çапа
Тăрса юлать пăтранчăк тинĕс.

◆



## ПИЛЛĔКМĔШ СЫПĂК

Эпир пĕрре кунта ç̆уренĕ...
Умра каллех Саркун çĕршывĕ!
Ели-пикен садри керменĕ
Темле хальччен упраннă сывă.
Тултан пăхма кăна çапла-мĕн,
Юн сивĕнет кĕрсен шала.
Пӳлĕмсене курса паллаймăн,
Тарăхнипе çыртан шăла:
Сĕтел-пуканĕсем йăлт ванчăк,
Тумтир тавраш̆ĕ çуркаланнă.
Чарусăр кашкăр, урнă анчăк
Килсе-шим çĕмĕрнĕ, тулланă?..
Крыльца умне тăпăртатса,
Пырса тăрать кăвак лаша.
Пуçне тытса ик аллипе,
Хуçи ун путнă шухăша.
Керим иккен вăл хуйхăрать,
Пĕлмест савнийĕ ăçтине.
Куççульсĕр шăппăн макăрать,
Асăрхаймасть урхамахне.
Лаши каллех ун кĕçенет,

Вӑл, тен, темскер каласшӑн пуль.
Курать Керим: чӗрҫи ҫине
Таҫтан ӳкет мерчен куҫҫуль.
Этем пекех йӗрет иккен
Ука ҫилхеллӗ урхамах,
Калать лаша чӗлхипелен:
— Хӗнхур,— тет,— пирӗн
ҫывӑхрах!
Мӗнле сас пур-ха таврара?
Тӑпӑртатать шӑп виҫ ура!
Хӗнхур лаши! Ҫавах! Ҫавах!
Сисет хыҫран кам килнине,
Сикет ҫӗре чава-чава,
Вӑл хӑтарасшӑн хуҫине...
Керимӗн учӗ кӗҫенет,
Калать Хӗнхурӑн лашине:
— Аппаҫӑм! Йӑмӑку килет!
Пӑрах эс тамӑк патшине!—
Хӗнхур лаши те кӗҫенет,
Ҫапла калать урхамахла:
— Хӗнхур—телейӗм ман, тивлет!
Эп пурӑнатӑп унпала!
— Апла пулсассӑн, тӳс, аппа!—
Керим лаши татах кӗҫенчӗ,
Тапса вӑл сикрӗ пур вайпа —
Тӳпе аслатилле чӗтренчӗ.
Пӗчченҫӗ мар иккен Хӗнхур,
Ун умӗнче выртать пике.
Сӑн-пичӗ пир пекех шап-шур,
Ку тыткӑнри Ели иккен!
Керим тытатчӗ Хӗнхура,
Анчах ун учӗ — виҫ ура
Лекесшӗн мар-ха тыткӑна,
Тӳпенелле вӑл ыткӑнать!
Хӗҫсем выляҫҫӗ тӳпере:

Пĕри — çӳлте, тепри — лере...
Хĕнхур вĕçет çĕлен пулса.
Кĕписене чăр-чар çурса,
Ели сикмешкĕн тăрăшать,
Турткаланать, хăлаçланать.
Керим сулать хăй сăннине,—
Хĕнхур юнланнă аллине
Вĕçертрĕ хĕр пилĕкĕнчен...
«Çăлсам мана, Керим!»— тесе,
Пике, хăех вĕçерĕнсе,
Тӳрех чăмтарчĕ çĕрелле,
Аманнă акăш темелле.
Анчах Керим пĕр самантра
Тытайрĕ савнă çăлтăра!
Хĕнхур кĕресшĕн мар вăрçа:
Утне кермен енне пăрса,
Вĕçет çĕре, пĕр сарайне...
Керим çӳле йăтса хĕçне,
Унта васкарĕ çапăçма,
Анчах та Хĕнхура тарма
Яр уçăлчĕ шалти хапхи.
Хĕнхур вĕçсе тухсан вутла,
Шăлт-шалт çеç хупăнчĕ хайхи —
Кунтан тухма та ан шутла!
Керим лаши те ыткăнса
Тухмашкăн ĕлкĕрчĕ иккен.
Ели те каччă вăркăнса
Юлайрĕç-çке йĕнер çинчен.
Туймасть Керим кунне-çĕрне,
Тăн çухатни ун пĕр эрне.
Ели пĕчченçĕ макăрса
Ларать-çке кунĕ-çĕрĕпе.
Сасартăк илтĕнчĕ пĕр сас:
«Тăшман пĕтмест эс йĕрнипе...»—
Темле хĕрарăм тĕттĕмре

Сирет асаплă шăплăха.
Сасси! Сасси епле хитре,
Йăлт мантарать хуйха-суйха.
Сарай стенийĕ ансăр мар,
Анчах çав сасă ян килет:
— Капла пуçна усса ан лар,—
Терте çĕнмешкĕн пĕлмелле!
Ан макăр-ха, Ели, итле:
Çак тĕрмерен тухаймасан,
Кунта пурин те вилмелле.
Савну тăна кĕреймĕ сан.
Ели лăпланчĕ. Пирĕшти
Ăçтан-ха тупнă тĕрмене?»
— Пирĕшти мар, Керим лаши,—
Тесе калать пике хăйне.—
Эп малтанах лаша пулман,
Эп пулнă сан пекех пике...
Тухатмăш карчăк Шапатан
Мана хупсаччĕ читлĕхе.
Пире хĕненĕ кашни кун,
Паман тип çăкăр татăкки.
Пĕлев пек хытрĕ пирĕн чун.
Тӳс эсĕ те, Керим пики!
Часах эп хупăп куçăма,
Ман вилесси инçе те мар...
Эсир пултарăр çăлăнма —
Аркатăр тăшмана чăл-пар!
Ели, Керимĕн кĕсйинчен
Эс ил телейĕн уççине:
Унпа халь, кăнтăр тĕлĕнче,
Уçсам Хĕнхурăн тĕрмине...
Ак тимĕр алăк. Çăраççи.
Сын йăтайми пит пысăк сăлăп —
Курсассăн чĕтрĕ чĕркуççи!
Тытма юри туман-тăр хăлăп.

Ели уçça пăрсассăнах
Янрарĕ кайрĕ тимĕр алăк.
Вăйпа туртса пăхмасăрах
Ăна çăп-çăмăл уçрĕ алă.
Ели тухать, Ели сывах,
Анчах Керим тăмасть çавах.
Час кĕреймест иккен тăна
Хĕнхур тухатнăран ăна.
Ели тав турĕ пикене,
Вĕсем пĕрле ыталанса
Куççуль юхтарчĕç куçсенчен.
Вут çĕленсем авкаланса
Килсе хупларĕç пур енчен.
Çĕлен-калта — умра, хыçра...
Пике каларĕ: «Ан хăра,
Ели, çĕлен чашкăрнинчен.
Хăрушă мар пире çĕлен!»
Хура çунатлă çĕленсем
Вĕçсе хупларĕç хĕвеле.
Сăхмашкăн хатĕр сăннисем,
Çунаççĕ куçĕсем хĕмле.
Тимрен хăранă çăхансен
Явăнакан кĕтĕвĕ евĕр,
Вĕçсе анаççĕ тӳперен,
Анаççĕ те ларма пĕлмесĕр
Хăпса вĕçеççĕ çĕнĕрен.
Хĕр, çĕленсен умне тухса,
Касса ярать ал тымарне.
Хĕр юнĕ çăп-çăра, таса,
Юхса анать тип çĕр çине,
Хĕретрĕ курăка чĕр юн,
Хĕр ĕмрине ăшăтнăскер.
Халех вилет-шим ыра чун?
Мĕн тумалла Елин, мĕскер?
Юнран çĕкленчĕ те вут-çулăм,

Çунтарчĕ сăх çĕленсене.
Усал-тĕсел йăлт пĕтрĕ пулĕ,
Йăванчĕç пурте çĕр çине.
Хастар пике сăн-питĕнче
Юлмасть пĕр хĕрлĕ юн пĕрчи,
Аран тăрать ури çинче
Утравăн паттăр хĕрачи.
Тумлать пуль юлашки тумлам,
Пуçлать хĕр ӳчĕ сивĕнме.
— Кала,— тет хĕр,— манран
салам
Чунтан юратнă Кериме...
Илсем çак тутăра, Ели,
Унпа пĕрле юлать ман ят.
Илсем çĕрре Керим валли,
Анчах ăна эс ан çухат.
Ман ӳтĕме çĕр йышăнсан,
Чечек шăтайĕ çакăнта.
Ăна, тăванăм, ăнсăртран
Асăрхамасăр ан тапта.
Пĕр çулçине татса хуллен,
Эс Кериме шăрăшлаттар...
Чипер юл, тусăм, ан çиллен,
Ак манăн ирĕклĕ масар!
Пике шуралчĕ тăнăçем.
Хуралчĕç, сӳнчĕç куçĕсем...
Ели пĕччен. Хир тăлăх пек.
Тусан хуплать çавра çиле.
Масар çине тĕлĕнмелле
Шăтать илемлĕ шур чечек!
Йĕри-тавра пит инçене
Сарать вăл ыра шăршине.
Чечек — тĕнчешĕн ыр тивлет,
Телей вăл, сывлăхшăн эмел.
Хăй ырлăхне савса пиллет

Чечексене çурхи хӗвел.
Умне чечек хурсассăнах
Керим уçать куçне, пăхать:
— Ăçта,— тет,— пирӗн
урхамах?—
Çумри хӗçне ярса тытать.
Лăплантарать ăна Ели,
Йăлтах калать мӗн пулнине.
Салхуллă ўкӗнӗç палли
Витет Керимӗн сăн-питне.
Тўпе — çап-çутă кӗленче,
Кусать хӗвел — кăвар çăмха.
Пӗр çухрăм яхăн мал енче
Чул ту пытаннă чăтлăха...
Унта Хӗнхур керменӗсем
Тем пысăкăш, элем-селем!..
Халь Кериме калать савни:
— Керим, куратăн, ав, лере
Чипер чечек... сана чӗртни...
Çунса ларать епле хитре!—
Вӗсем пуç тайрӗç çӗрпе тан,
Пуç тайрӗç пурнăçшăн вӗсем.
Туха пуçларӗç анăçран
Хура упа пек пӗлӗтсем...
Вун виçӗ пӗлӗт инçетре —
Хура, тăсланкă, çуркаланчăк...
Каллех, каллех мӗн пур çӗре
Чечекӗн ыр шăрши саланчӗ!
Чӗресене чечек шăрши
Парать хăюлăх, вăй-хăват.
...Тусать çӗрпе тўпе хушши,
Унта шавлать тем хăямат.
Вун виçӗ татăк пӗлӗте
Çил хăвалать ула-ула.
Вун виç мӗлке — вун виç çӗрте

Килеççĕ хăвăрт кунталла.
Çара уй-хир тĕттĕмленет,
Çĕре сĕм каç хуплана пек.
Вут-çулăм евĕр хĕмленет
Хирте асамлă çут чечек.
Çилсем вĕçеççĕ çутталла,
Тусан пухаççĕ çак тĕле.
Хайхи чечек асаматла
Фонтан таптарчĕ çӳлелле!
Фонтан сикет, чечек çути
Сăнне парать шыв пĕрчине.
Чим, чим! Таçта такам утти
Кисрентермест-и çĕр питне?!
Вун виçĕ пĕлĕт аякран
Çывăхарать çывхарнăçем.
Камсем вĕсем, хăш вăрçăран,
Утсем çине утланнисем?
Аслати мар кĕрлет иккен,—
Асăрханса итлер-ха, чимĕр!
Аллисенче хĕçпе кистен,
Тумтирĕсем йăлт хурçă-тимĕр,
Хура тăсланкă утсемпе
Вĕçсе килеççĕ çывăха...
Хĕнхур иккен... шăллĕсемпе!
Элле, вăл халь те сывă-ха?
Керим палларĕ Хĕнхура...
Мĕскер тăвас?.. Ĕçсем начар.
Пĕччен юлать вăл ункăра,
Лешсем вун виççĕн—вăй тан мар.
Керим хăрушă вилĕме
Пултаратех кĕтсе илме.
Ик куçĕ çиçĕм евĕр пулчĕ,
Ун чĕринче — хаярлăх вучĕ.
Вăл арăслан пек кĕрешме
Пĕччен те хатĕр çĕрĕшпе!

Пулинччĕ халĕ ун лаша!
Пĕччен пит йывăр паттăра...
Анчах мĕнле ку тамаша?
Мĕн пăсланать фонтан тавра?
Фонтанăн шывĕ, вутлă пек,
Пуçларĕ хыттăн вĕреме.
Çиçсе ларан шап-шур чечек
Пушшех çутатрĕ çереме.
Фонтан илейрĕ чӳхенсе,
Шап-шур лаша—шап-шур çунат
Унтан тухайрĕ кĕçенсе!
Хĕçне çĕклет Керим-хăлат,
Каллех çуталчĕ-çке тĕнче:
Керим çунатлă ут çинче!
Хăватлă ут — ука йĕнер
Вĕçсе çĕкленчĕ çиçĕмле!
Хĕçсем вылярĕç вут-хĕмле!
Пулăшăва кама чĕнер?
Çунатлă ут пулсан тепре,
Ели те кĕрĕччĕ вăрçа!
Пусăрăнма пĕлмест чĕре,
Вĕри куççуль хуплать куçа.
Керимĕн хĕçĕ пит вĕри,
Пĕçертекен пулать алла.
Аманчĕ, сирпĕнчĕ пĕри
Лаши çинчен аялалла!..
Хĕç çапăнса янрать хĕçпе!
Касать ӳте, касать çиле!
Çĕкленнисем чĕр юн ĕçме
Ӳкеççĕ йăлт виле-виле!
Илтет çур уйăх таçтанах
Хĕçсем ванса чăнлатнине.
Керим утланнă урхамах
Халь хăвалать тăшмансене!
Çӳл тӳпере юлаççĕ иккĕн,

Хĕççем янраççĕ чăн та чан!
— Хура Хĕнхур, часах эс вилĕн!
Куçна чавма кĕтет çăхан.
Нумай ыр çын пуçне эс çирĕн,
Нумай юн ĕçрĕн тамăкра!—
Керим вĕçет хаяррăн, вирлĕн,
Тарма памасть вăл Хĕнхура.
Ырса çитсессĕн çав тери,
Хĕçпе касма пĕрне-пĕри
Тăраççĕ ик хаяр тăшман.
Çамкаранах чукун такан
Пырса та лекрĕ Хĕнхура!
Сасартăках çав хушăра,
Çут çиçĕм çиçнĕ пек кĕç-вĕç,
Хĕнхур çинче çуталчĕ хĕç!
Аслатилле çапнипелен
Хĕнхурăн пуçĕ мăй çинчен
Аяккалла ывăтăнать,
Ӳт-пĕвĕ çĕрелле чăмать.
...Шăрçа сапать фонтан хавассăн
Çĕнтерӳпе Керим çитсен.
Паттăрсене вăл тем калассăн
Куççуль юхтарчĕ пулĕ, тен...
Утрав пикин çут çĕррине
Парать Ели хăй каччине.
Керим тав турĕ сар хĕре:
— Çухатмăп,— терĕ,— çак çĕрре
Чĕрем тапма чарăниччен,
Ик кăйкăр куçăм сӳниччен.
— Ман çĕрĕ мар ку,— тет Ели,
Именнĕ пек пăхса çĕре,—
Утрав пики сана валли
Парса хăварчĕ çак çĕрре.
Вилес чухне иксĕмĕре
Ыр пурнăç сунчĕ ĕмĕре.



Нихҫан та манмăпăр, нихҫан,
Ун кăмăлне, таса чунне.
Чечекленсе сикех, фонтан,
Ҫутту сан кайтăр инҫене.
— Мĕн-ма фонтан тавраш̆енче,—
Керим калать,— ӳсмест-ши сад?
Ăна тума — кала, тĕнче,—
Ҫитет-ши манăн вăй-хăват?
Куҫ уҫса пĕр хупиччен —
Йĕри-тавра мĕн пур енче
Шăтса ешерчĕ симĕс улăх,
Ытарайми хитре те тулăх!
Таҫта та пыл, чечек шăрши,
Чăпаррăн курăнать ҫаран.
Мĕнле ҫеҫ курăкĕ ҫук-ши:
Серте, сар пуҫ та пултăран...
Чăпар куккук авăтнипе
Янрать вăрманĕ ян та ян!
Тасалнă сывлăш та тӳпе
Хĕнхур хăварнă тусанран.
Ҫӳл ту-и ку е пысăк палăк?
Ун пĕр енче пур тимĕр алăк.
Мĕскер тăвас? Телей уҫҫи
Ҫак алăка уҫайĕ-ши?
Уҫсассăн пысăк алăка,
Керим тӳрех мĕн курчĕ-ха?
Ҫап-ҫутă ир. Тавралăха
Йăлтăртатса савать хĕвел.
Пур ҫамрăк тухнă улăха,
Янăратать юрра-кĕвве.
Ем-ешĕл улăх ҫеҫкере,
Савăнăҫпа тулать чĕре.
Хаваслăхпа ҫиҫет Ели,
Пур-ши ун евĕр телейли?
Япшар тумланнă сар хĕрсем

Вăййа чĕнеççĕ: «Килĕрсем!
Савмастăр-им эсир пире?
Кĕтетпĕр кăмăлтан сире».
«Ташла ăста! Ташла ăста!»—
Тесе шăратрĕç купăспа.
Ытарайми пур таврара
Илемлĕ юрă янăрать:
«Хурăн турта хуçăлчĕ,
Юман турта сыпăнчĕ.
Кив самана вырăнне
Çĕн самана пуçăнчĕ!»
— Мухтав, Керим — çунатлă
паттăр,
Мухтав, Ели — хĕвел пики,
Телей çулне эсир тупайрăр,
Тытса парсамăр тав курки!



## ТУПМАЛЛИ


Пĕрремĕш сыпăк . . . . . . 3
Иккĕмĕш сыпăк . . . . . . 9
Виççĕмĕш сыпăк . . . . . . 15
Тăваттăмĕш сыпăк . . . . . . 25
Пиллĕкмĕш сыпăк . . . . . . 35



ДЛЯ СТАРШЕГО ШКОЛЬНОГО ВОЗРАСТА

Афанасьев Алексей Андрианович

КЛЮЧ СЧАСТЬЯ

Сказка в стихах

На чувашском языке

Рисунки художника *Э. М. Юрьева*
Редактор *Ю. П. Петров*
Художественный редактор *М. А. Ильин*
Технический редактор *А. Ф. Никитина*
Корректор *Р. И. Белова*

НТ 02980. Сдано в набор 14-VII-1965 г. Подписано к печати 2-X-1965 г. Изд. 99/65. Формат 60×84 1/16. Физический печ. л. 3,0. Условный печ. л. 2,79. Учетно-изд. л. 2,17. Заказ № 3062. Тираж 3000 экз. Цена 11 коп.

Чувашкнигоиздат, Чебоксары, К. Маркса, 36.

Типография № 1 Управления по печати при Совете Министров Чувашской АССР
Чебоксары, Володарского, 5.

Цена 11 коп.